Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

13 (7653) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи февралĕн (нарăс) 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыр кăмăллăх

Сумлă ентеше асăнса

Кăçалхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ, летчик-космонавт А.Г. Николаев çуралнăранпа 80 çул çитет. Чăваш халăхĕ çак хастар çын çинчен манмасть, унпа тивĕçлипех мухтанма пултарать. Андриян Николаевăн шăпи вара пире çеç мар, ытти пин-пин çыннăн та интереслĕ.

Çитес юбилей ячĕпе Ю.Устинов генерал-майор 2004 çулта çырса кăларнă «Космонавт № 3» кĕнекине тепĕр пай хушса кăлăрасшăн. «Халăх асĕнче» ятлă пай пулать вăл. Çавăнпа та пирĕн ентешпе çыхăннă сăн ӳкерчĕксем тата ытти тĕрлĕ материалсем пур пулсан, вĕсемпе эсир кĕнеке кăларакансене пулăшма пултаратăр. Унсăр пуçне «ниме» мелĕпе – укçатĕнкĕпе пулăшса – çак кĕнекене кăларас ĕçе хутшăнакансем те айккинче тăрса юлмасса шанатпăр.

Кĕнеке кăларасси çинчен тĕплĕнрех ЧР Культура министерствин сайчĕ çинче пĕлме пултаратăр.

Паян – информаци кунĕ

Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Паян районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн теми – республика экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн çирĕплĕхне ӳстермелли мерăсем, 2009 çулта çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх паракан услугăсен тарифĕсем тата граждансен уйрăм категорийĕсене социаллă пулăшу парасси çинчен.

ЧР Патшалăх Канашĕн ертӳçин çумĕ В.П. Мидуков ертсе пыракан ушкăн Муркаш райповĕпе Ильинка ял тăрăхĕнче пулать.

Чăваш ял хуçалăх академийĕн ректорĕ Н.К. Кириллов ертсе пыракан ушкăн Йӳçкасси, Чуманкасси, Çатăракасси шкулĕсене çитет.

Сывă пурнăç йĕркишĕн

Спортпа сывлăх уявĕ

Вырсарни кун, февралĕн 15-мĕшĕнче, Муркашра чăннипех те сывлăхпа спорт уявĕ пулчĕ. «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2009» массăлла старта 71 команда тухрĕ. 700 ытла йĕлтĕрçĕ тĕрлĕ дистанцисенче вăй виçрĕ. Ăмăртăва пуçтарăннисене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикипе архив ĕçĕн министрĕ Р.М. Лизакова тата ыттисем те саламласа ăнăçу сунчĕç.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

Сăн ӳкерчĕксенче: ăмăрту саманчĕсем.

Ыйту – хурав

Ĕçсĕррисен шутне тăрас тесен

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта ĕçсĕррисен шутне тăмалли йĕрке интереслентерет. Ун пирки хаçат урлă пĕлтерме май çук-ши?

Б. ВАСИЛЬЕВ.

Ыйту çине районти ĕçпе тивĕçтерекен центрăн ертӳçи Тамара Афанасьевна АНТОНОВА хуравлама кăмăл турĕ:

– Раççейре пурăнакансем те тĕнчери кризиса сисеççĕ ĕнтĕ. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта хальхи вăхăтра учета тăрас текенсен черечĕ те пур. Ĕçсĕррисене паян мĕн чухлĕ тӳлеççĕ? Раççей Федерацийĕн Правительстви ĕçсĕрлĕхшĕн тӳлемелли уйăхри чи пысăк виçене 4900 тенкĕ тата чи пĕчĕккине 850 тенкĕ тесе палăртнă. 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçсĕрлĕхшĕн тӳлекен пособи виçи çынсем ĕçрен мĕн сăлтавпа тухнинчен килмест.

Кăçалхи январь уйăхĕнче ĕçпе тивĕçтерекен центрта регистрациленес текенсен шучĕ вăтамран 30 процент ӳсрĕ. Сăлтавĕсем пурин те тĕрлĕрен. Хăшĕ-пĕри хăйĕн квалификацине улăштарасшăн, теприсем йĕркеллĕ ваканси тупасшăн. Ĕçсĕррисем валли сĕнекен ĕçсем хушшинче пысăк ĕç укçиллисем нумаях мар. Вакансисен хисепĕ те икĕ хута яхăн чакрĕ. Паян ĕç шыракан хăйĕн опытне тата квалификацине кура уйăхне 4330 тенкĕрен тытăнса 5 пин тенкĕ таракан тӳлекен ĕç тупма шанма пултарать.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ май

«Çынра чи хакли – ырă кăмăл»

– Сергей Михайлович, пăрахут çинче хĕрарăм ача çуратать. Капитан ăна пирĕн пата хăварасшăн. Мĕн тумалла? – хĕрарăм хытă пăлханать пулас.

– Эпĕ часах çитетĕп. Мĕн тумалли курăнĕ унта, – терĕ те Мăн Сĕнтĕрти акушер-гинеколог С.М. Ванюков, телефон трубкине хучĕ, хăвăрт çула пуçтарăнчĕ. Ильинкăри ача çурчĕн акушерки Христина Трифоновна Баранова та хăйне темле лăпкă туйса ячĕ: Сергей Михайлович килет, йăлтах йĕркеллĕ пулать.

Вырăна çитсен вара çакă паллă пулчĕ. Мари республикинчен темиçе çын Астрахане ĕçлеме кайнă иккен. Августра киле каялла килме тухнă. Вĕсен хушшинче паян-ыран ача амăшĕ пулма хатĕрленекен хĕрарăм та пулнă. Саратов патнелле çитсен хайхискерĕн хырăмĕ ыратма пуçланă. Ыратнине пăхмасăр Самара та, Чĕмпĕр те хыçала юлнă – капитана нихăшĕ те пĕр сăмах та шарламан. Хусан патне çитсен вара ачан урисем тухма пуçланă – тин ăшталанма пуçланă хайхискерсем.

– Ильинкăра чарăну пулать, – тенĕ капитан.

– Юрать-ха, вăл урисемпе тухнă. Унсăрăн ниепле те хăй тĕллĕн çуратаймастчĕ вăл. Енчен те ача пуçĕпе тухнă пулсан, амăшне те çăлса хăварма май пулмастчĕ, – аса илсе хаш! сывлать паян Сергей Михайлович.

Ун чухне вара капитан мĕнле те пулин хĕрарăма Ильинкăра хăварасшăнччĕ. Ыратман пуçа камăн ыраттарас килтĕр?

– Эп ăна кунта хăварма пултараймастăп, – терĕ акушер-гинеколог.

– Апла пулсан эпĕ хускалатăп, - хăйĕннех пенĕ капитан.

–Эпир те сирĕнпе пыратпăр. Манăн ăна кунта хăварма право çук, мĕншĕн тесен вăхăта сая ямасăр операци тумалла. Сирĕнпе Чулхулана çити пыратпăр, – терĕ Сергей Михайлович.

– Унтан каялла мĕнле килетĕр?

– Нимех те мар. Тĕнче ыр çынсемсĕр мар вĕт, – терĕ те врач, операцие хатĕрленме пуçларĕ. – Пурне те каютăран тухма ыйтатăп.

Капитанăн хăйĕн хуйхă: рейс вăхăтра çитеймест. Апла пулин те вăл çула тухма тăхтама шутларĕ.

– Сахалтан та 1,5 сехет иртет, – терĕ вăл ыйтуллăн пăхакан капитана.

Операци йĕркеллех иртрĕ. Ача 4800 грамм виçепе вилĕ çуралчĕ. Пуç мимисĕр. Хĕрарăма вилĕмрен çăлса хăварчĕç. Капитан та лăштах! сывласа ячĕ. Ун хыççăн хĕрарăма Ильинкăри ача çуратмалли çурта хăварчĕç. Ку ялтах унăн тăванĕ те тупăнчĕ. Ачине те çакăнтах пытарчĕç.

Мĕн чухлĕ çапла манăçми самант пулман пулĕ Сергей Михайловичăн акушер-гинекологра ĕçленĕ чухне. 1966 çулпа 1985 çулччен çак профессипе ĕçлерĕ те-ха. Сахал вăхăт мар вĕт çакă.

Ĕç биографийĕ вара Воронеж облаçĕнчи Грибановка ялĕнче çуралса ӳснĕ каччăн Мăн Сĕнтĕр больницинче инфекци чирĕсемпе кĕрешекен тухтăрта ĕçлеме пуçланипе çырăнма тытăнчĕ. Ун чухне Волгоградри патшалăх медицина институтне пĕтернĕ чи пултаруллă 20 ытла врача Чăваш Ене ячĕç. Сывлăх сыхлавĕн министерствин направленийĕпе вара шăпа Ванюкова Мăн Сĕнтĕре илсе çитерчĕ. Пултаруллă тухтăра тепĕр çултанах хирурга куçарчĕç. 1966 çулта вара гинеколог урăх вырăна куçса кайрĕ те – Сергей Михайлович ун вырăнне юлчĕ.

– Район питĕ пысăкчĕ. Гинеколог вара пĕрре. Муркашра та ку профессиллĕ врач çукчĕ. Унта та, Турайне те, Ювановăна та (унта 35 койкăллă ача çуратмалли çуртчĕ) çитмеллеччĕ. Мăн Сĕнтĕр районĕнче вăл вăхăтра тата 2 колхозăн ача çуратмалли çурт пурччĕ: Нискассинче тата Ильинкăра. Ачасене унта çуратнă, – иртнине куç умне кăларать 72 çулхи врач.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Районти милици – 65 çулта

ХИСЕПЛĔ МИЛИЦИ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире çывхарса килекен уявпа – районти шалти ĕçсен пайĕ 65 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатăп.

Служба йĕркеленнĕ кунран пуçласах эсир обществăлла йĕркелĕхе сыхлатăр, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе панă прависене хӳтĕлетĕр. Хăвăр тивĕçĕрсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыратăр. Нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр районти лăпкăлăхпа тăнăçлăха сыхлатăр. Эсир йĕркеллĕ ĕçлесе пынипе районта преступленисене уçасси ӳссех пырать. Тавах сире çăмăл мар, пархатарлă ĕçĕршĕн.

Право йĕркине сыхлакан органсенчи ветерансен ячĕпе уйрăмах тав сăмахĕ калас килет. Паянхи çамрăк сотрудниксем вĕсен опытне ăша хывса, професси тивĕçĕсене таса чун-чĕререн пурнăçласса шанас килет.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп. Çемйĕрсенче лăпкăлăх хуçалантăр, çĕр-шывра тăнăçлăх пултăр.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Республикăра

Çĕнĕ ĕмĕрте çĕнĕ ялсем çĕкленĕç

Республика президенчĕн указĕпе килĕшӳллĕн ял тăрăхĕсенче çурт-йĕре комплекслă майпа компактлă лартас тата вĕсене тирпей-илем кĕртес енĕпе проект ĕçлеме пуçларĕ.

Республика ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев правительствăн иртнĕ юн кунхи ларăвĕнче палăртнă тăрăх, ялта тата ун тулашĕнче пурăнмалли вырăнсем 21 ĕмĕрти ялсем пулмалла. Вĕсене пурне те урамри электричество çутипе тивĕçтерĕç, çулсемпе тротуарсем туса парĕç.

Проектсене 27 виçепе хаклама палăртнă. Вĕсем виçĕ ушкăнра иртмелле, 10, 20 тата 50 çуртран тăракан пурăнмалли вырăнсем тума 60, 100, 220 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă.

Çак проекта пурнăçлама федераци 1 миллиард та 113 миллион тенкĕ парĕ. Республика 50 миллион тенкĕ уйăрĕ.

Ĕçсĕр çынсене пулăшу кӳме – 526,32 миллион тенкĕ

Тунти кун ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров правительство членĕсемпе канашлу иртternĕ.

РФ Правительствин председателĕн çумĕ Александр Жуков февралĕн 11-мĕшĕнче Мускавра иртternĕ канашлура пирĕн республикăри ĕçсĕр çынсене хушма пулăшу кӳмелли тĕллевлĕ программине ырланă, ăна пурнăçлама 526 миллион та 320 пин тенкĕ куçарма йышăннă. Çапла майпа пирĕн республикăра пурăнакан 3,5 пин çынна професси пĕлĕвĕ пама 32 миллион та 670 пин тенкĕ, çынсен хăй тĕллĕн вĕренмелли аталанăвĕ валли 6 миллион та 165 пин тенкĕ, 29 пин çын (çав шутра пĕлӳ паракан учрежденисенчен вĕренсе тухакан 4 пин çамрăк) валли вăхăтлăх ĕç вырăнĕ хатĕрлеме 476 миллион та 485 пин тенкĕ уйăраççĕ. Унсăр пуçне кăçал инвестици проекчĕсене пурнăçласа 5,6 пин çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелĕç.

Конкурс

Район кунĕ хăш ял тăрăхĕнче иртĕ?

Кăçалтан район кунĕсене ял тăрăхĕсенче иртterме палăртнă. Ку ыйтупа район администрацийĕн пуçлăхĕ январĕн 29-мĕшĕнче 26 № йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн тивĕçлине палăртма ял тăрăхĕсем хушшинче конкурс иртterеççĕ.

Вырăнти самоуправлени органĕсен конкурса хутшăнма комиссие ял тăрăхĕн территорине юлашки икĕ çул хушши аталантарни çинчен калакан материалсем тăратмалла.

Конкурс материалĕсене мартăн 1-мĕшĕччен çитермелле, конкурс итогĕсене комисси апрелĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмлетет, çĕнтерӳçĕне палăртать.

Тĕплĕнрех район администрацийĕнче ыйтса пĕлмелле.

Саламлатпăр

Хаклă Елизавета Ивановна ПИГАЧЕВА!

Сан ятна сăвапласа,
Ырлăхушăн тав туса
Пуçа таяс кăмăл пур,
Чунтан калас сăмах пур.

Сире чĕререн хисеплесе паян çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатăп! Çут тĕнчери чи ырă, ăшă сăмахсемпе паянхи кун тулса тăтăр. Сирĕн чун-чĕре ăшши хĕвел пек пур çывăх тăванăрсене çутатса тăтăр. Çирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене тата та нумайрах савăнтарса пурăнмалла пултăр сирĕн. Вĕсен юратăвĕ сире çунатлантарса тăтăр. Эпĕ сире питĕ хисеплетĕп, юрататăп. Эсир манăн пурнăçра пурришĕн савăнатăп. Сывлăх, телей, ăнăçу сире! Çавăн пекех унăн хуньямăшне, Анна Ивановнана, тата та сумлăрах юбилей ячĕпе саламласа сывлăх сунатăп.

Салампа Оля.

Хаклăран та хаклă пирĕн чи çывăх çынна – Йӳтĕркасси ялĕнче пурăнакан **Мария Ивановна МАТВЕЕВАНА** февралĕн 19-мĕшĕнче 85 çул тултарнă ятпа ăшă та çепĕç туйăмсемпе саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, сана тав туса сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, лăпкă пурнăç сунатпăр. Татах нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăн. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

Унăн мăнукне те, Отаркка ялĕнче пурăнакан **Любовь Пименовна ЗАХАРОВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Пурнăçра çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, тӳсĕмлĕхпе вăй-хăват сунатпăр. Савăнăç куççулĕ, телейлĕ кулă çиçтĕр сăн-питӳнте. Телей кашни самантрах сан умăнта пултăр.

Салампа Çатăракассинчи Смирновсен пысăк çемйи.